# XVIII-мĕш ĕмĕрти чăваш архитекторĕ

1950 çулта Ленинградри университетра вĕренекен Р. Д. Люлина университет вестникĕнче «Петр Егоров—Çуллахи садăн тимĕр картине тыттарнă архитектор» ятлă статья пичетлесе кăларчĕ. Çав статья тăрăх эпир Егоров чăваш çынни пулнине, вăл Петербургри Çуллахи садăн эрешлĕ тимĕр картипе хапхине тунă çĕрте тата Петергофри (хальхи Петродворецри) Мраморнăй кермене (двореца) лартнă çĕрте пысăк та чаплă ĕçсем тунине, талантлă архитектор пулнине пĕлтĕмĕр. Çак кунсенче Ленинградри палăксене сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен Государство инспекцийĕ Чăвашсен тĕпчев институтне Петр Егоров çинчен калакан архив документсене ярса пачĕ. Эпир хамăрăн хаçата вулакансене, çав документсем тăрăх, Егоров тунă ĕçсемпе тата унăн пурнăçĕпе кĕскен те пулин паллаштарасшăн.

Петр Егоров 1731 çулта çуралнă (çуралнă вырăнĕ халлĕхе паллă мар-ха, пирĕн институт ку тĕлĕшпе историе тĕпчекен Тĕп архивĕн Ленинградри пайне çĕнĕ материалсем ыйтса ячĕ; Егоров вилнĕ çул та паянхи куна паллă мар-ха, хăшпĕр документсем ăна 1790 çулта вилнĕ тесе кăтартаççĕ, анчах çак дата пирĕншĕн хирĕçуллĕ-ха, унпа эпир килĕшместпĕр, тĕрĕссине шыратпăр). Хăй çинчен Петр Егоров хăйĕн 1755 çулта çырнă çырăвĕнче (прошенийĕнче) тĕплĕн каласа парать, ăна вăл Елизавета Петровна императрица патне çырнă. «Сире эпĕ пуç таятăп, çĕре ӳксе пуççапатăп,—çырнă Петр Егоров,—эпĕ усал турăсемпе киреметсене пуççапса пурăнма пăрахнă чăваш, христиансен тĕнне йышăнса таса шыва кĕртнĕ çын, хам мĕн ыйтнине, аслă патшамăр, сире каласа парасшăн: 1) Çураласса эпĕ чăваш хушшинче, чăваш килйышĕнче çуралнă, анчах та мана ача чухнех пĕр генерал-майор, князь, Дадиан господин хăйпе пĕрле Российăна илсе кайрĕ. Вăл мана православнăй тĕне кĕртрĕ, ун патĕнче эпĕ паян кунччене пурăнтăм, çав генерал-майор мана вырăс чĕлхине вĕрентрĕ, вулама, çырма, шутлама та вĕрентрĕ, сăн ӳкерме, картинăсем тума та кăштах вĕрентрĕ. Анчах та çав господин генерал-майор патĕнче эпĕ чура шутне илнĕ çын пулса мар, хăй кăмăлĕпе илнĕ ирĕклĕ çын пулса пурăнтăм. 2) Вĕренсе илнĕ ăс-хакăла малашне те сарса пырас тесе, çунса тăракан чун-чĕрепе, иксĕлми ĕмĕтпе архитектура наукинче ĕçлес тесе, çавна пула вара, аслă патшамăр, сирĕн мухгавăрпа чапăра татах та пысăкрах тăвас тесе, мана сире пăхăнса тăракан архитектура ведомствине вĕренме илме, ырă кăмăллă пулма йăлăнатăп. Петр Егоров». (Егоров çырăвне эпир кунта кĕскетсе куçартăмăр, çав вăхăтрах XVIII-мĕш ĕмĕрти чĕлхе уйрăмлăхĕсене сыхласа хăварма тăрăшрăмăр).

Çак илсе кăтартнă документран Петр Егоров тĕне кĕмсн чăваш пулни паллă. Тĕне кĕмесĕр вăл 10—12 çул пурăннă пулас, мĕншĕн тесен чăвашсене 1740 çул хыççăн тин йышлăн тĕне кĕртме тытăннă. Егоровăн тĕп чăвашла ячĕпе хушамачĕ те пирĕншĕн халлĕхе паллă мар-ха. Вырăсла хушаматпа ят ăна Дадиан князь панă пулмалла. Ача тăлăх пулнă-и е унăн ашшĕ-амăшĕ пулнă-и—ку та паллă мар-ха. 1730—1760 çулсенче чухăн чăвашсем хушшинче, пурлă-çуклă пурнăçа пула, ачасене пуянсем патне темиçе çула тарçа парас йăла е парăмсене тӳлесе татма сутас йăла пулнă. Ачана 5—7 тенке сутнă. Хăш-хăш ача, срок тухсан, киле таврăннă, хăшне-пĕрне вара инçете илсе кайнă. Петр Егоров шăпи те çавăн пекех пулнă пулас. Хăй çырăвĕнче вăл крепостной çын мар, ирĕклĕ çын пулни çинчен çырать. Çав çырăва (прошение) çырнă чухне Егоров 24 çулхи çын пулнă. Эпир куртăмăр ĕнтĕ, унта вăл хăй чăваш пулни çинчен те тӳрех çырнă, мана чăваш тесе çул памĕç, хĕсĕрлеме пăхĕç тесе вăл вăтанса-хăраса тăман.

«Архитектура наукине вĕренме» илме Егорова Дадиан генерал-майор хăех пулăшнă. Ун ячĕпе панă рекомендацинче вăл çапла çырнă: «Егоров ман патăмра пурăннă чухне вулама, çырма, шутлама тата геометрие вĕренчĕ. Сăнсем ӳкерме, картинăсем тума та кăштах хăнăхрĕ. Вĕренессе тăрăшса, лайăх вĕренсе пычĕ, хăйне чипер тыткаларĕ. Пултаракан çын».

Егорова вырăс архитекторĕ Семен Волков арифметикăпа тата геометрипе экзамен тыттарнă, чертеж ӳкерсе илтернĕ. Вăл та унăн пĕлĕвĕпе ĕçне пысăк хак панă.

1755 çулта вара Елизавета Петровна императрица уйрăм Указ тăрăх «тĕне кĕнĕ Петр Егоров чăваша» Волков ертсе пыракан архитекторсен ушкăнне ученик пулса ĕçлеме илет. 1761 çулта Егорова 3-мĕш класлă помощник туса хураççĕ, 1763 çулта прапорщик ятне, 1765 çулта пĕрремĕш класлă архитектор ятне, 1768 çулта архитектурăра лайăх ĕçленĕшĕн, хăй ĕçне тарăн пĕлнĕшĕн титулярнăй советник ятне параççĕ.

«Суб-архитектор» (архитектора пулăшакан çын) пулса Петр Егоров чаплă Растрелли ертсе пыракан архитекторсен ушкăнĕнче те ĕçленĕ. Растрелли хăйĕн хучĕсем çине, «Егор» тесе çырса хунă, хушаматне лартма маннă пулас.

Мраморнăй керменăн проектне Р. Ринальди тунă теççĕ, анчах та çав çурта çав проект тăрăх Петр Егоров тутарнă. Апла пулсан, вăл Ринальдипе пĕрлех Мраморнăй Кермене тутарнă çынсенчен пĕри.

Çуллахи садăн эрешлĕ тимĕр картине тытас тĕлĕшпе Петр Егоров тăратнă проекта ют çĕршывран килнĕ Фельтен архитектор пăхса тухнă, вăлах ăна çирĕплетнĕ, çавăнпа та Фельтене халиччен çав тимĕр картана тыттарнă çын тесе шутланă, чăннипе илсен, ун авторĕ те, ăна тыттараканĕ те Петр Егоров пулнă. Ют çĕршывсенчен чĕнсе илнĕ архитекторсем вырăс архитекторĕсене путарса пыма тăрăшнипе Петр Егоров хушамачĕ те нумай вăхăт хушши паллă пулман.

**П. ГРИГОРЬЕВ,**
**истори наукисен кандидачĕ.**